25/4 252/3
А

АЛЕНТЕЙ

# ПИРĔН САВĂ

Шупашкар, 1925 ç.

Илларионова курма Алентей 17/II 25

*Алентей.*

# ПИРĔН ÇĂВĂ

Çăваш писателĕсен «Канаш» сойусĕ.

ШУПАШКАР ХУЛИ
1925 ç.

Чувашлит № 1032. Печ. 2000 экз

Гор. Чебоксары типография „Чувашская Книга“.

## Умĕнхи сăмах.

Ҫырулăх ĕҫĕ пирĕн аталанса пыраҫ. Куҫтурлă халăхсен ҫырулăхĕпе танлаштарсан пирĕн ҫырулăх ҫукпа пĕрех, кайа йулнă халăхсен ҫырулăхĕпе танлаштарсан епĕр вĕсенҫен кăшт малта пыратпăр. Ҫырулăх ĕҫĕ шăнса ларнă вырăнтан пирĕн Октапĕр революҫутсийĕпе кăна тапранҫĕ. Патшапа пуршуаҫи пусмăрĕпе ҫăваш ĕҫҫыннин ҫыварса кайнă сисĕмлĕхĕ вăранни ҫиҫĕ ҫул иртрĕ. Ҫăваш ĕҫҫыннин тимлĕхĕ, ҫивĕҫлĕхĕ, тарăнлăхĕ ҫырулăха (хут ҫине) халĕ тин ӳкерĕнсе пыма пуҫлаҫ. Ҫăваш ҫырулăхĕ аталанса пынă вăхăтра пирĕн ҫăваш хушшинҫен тухакан сĕткенсене, талантсене палăртса пымалла. Вĕсен ҫулне уҫса пынă майĕпе ҫĕнелекен ҫăваш йалĕ тата вăйлăрах, хĕрӳллĕрех, виҫкĕнрех, ҫивĕҫрех талантсене кăларма пуҫлĕ.

Алентей — авалхи ҫăваш йаҫĕ. Анҫах епĕр кунта авалхи ҫăваш йаҫĕ ҫинҫен мар — ҫĕнĕ Алентей ҫинҫен каласшăн.

Алентей Арапуҫ вулăсĕнҫен (Ҫĕрпӳ у.) Кĕтеснер тенĕ йалтан. Алентейăн ытти аҫасем выҫаса ҫӳренĕ ҫӳренĕ вăхăтра хирсенҫе сурăхсем, ĕнесем хыҫҫăн ҫӳремелле пулнă. Виҫĕ ҫул хушши вăл кĕтӳ кĕтнĕ. Унăн пуҫĕнҫе ҫамрăклах ҫăваш ĕҫҫынни хуйхисуйхи ҫутăлма пуҫланă, унăн ҫĕри нушта куракан ҫыннăн ҫĕрипе пĕрле тапнă.

Ҫӑваш ҫырулӑхӗ аталанса пынӑ вӑхӑтра ҫырулӑх ӗҫне пӗлекенсем, ҫырулӑха йуратакансем, ҫырулӑха пролеттари тиктаттурине ҫирӗплетсе пыракан ҫулпа йама пултаракансем кирлӗ. Алентей ҫак кирлӗ йулташсенҫен пӗри пулаҫ. Унӑн ҫӑварӗпе ҫитес ҫӗнӗ пурнӑҫ патнелле шума пулӑшакан условисене, мелсене хатӗрлеме тыгӑннӑ ҫын калаҫаҫ. Ку вӑхӑтҫенхи ҫӑваш ҫыруҫисем (ҫылайӗшӗ) ҫӑваш пуйанӗн (ҫӗрме пуйан) пурнӑҫне ырласа ҫырма йуратнӑ пулсан, Алентей, револҫутсипе килнӗ ҫыруҫ, хӑйӗн малтанхи сӑввинҫех:

„Ӗҫпе пиҫнӗ йӑвӑр пурнӑҫлӑ ҫынсене
Йурлатпӑр епӗр—ӗҫпе ӳсӗрлнӗ, халҫ килнӗ сӑвӑҫсем,‘

тет. Хӑйӗн сӑввисенҫе вӑл — хӑй ӗҫҫыннине ҫӗререн йуратнине, ӗҫҫыннипе пӗрле макӑрнине, кулнине, малалла утнине кӑтартаҫ. Ҫак сӑвӑсем ҫӑваш ӗҫҫынни хушшинҫе хунавланакан ҫамрӑксемшӗн усӑллӑ пулмалла.

Солӑттӑв М.

## Пирĕн сăвă.

Хитре хĕрсене, илем тивлетне мухтаççĕ сăвăçсем,
Сăра ĕçниве, ерех çирĕпне саваççĕ вĕсем.
Савнăç хушшинҫе асаççĕ кив сăвăçсен паттăрĕсем,
Йуратнипе илеме çеç кураççĕ вĕсен куçĕсем.
— Ĕçсĕрсене мар, илемĕпе ҫапланнине те мар,
Хĕраҫана йуратнипе асапланнине те мар, —
Ĕçпе пиçĕхнĕ, йăвăр пурнăçлă çынсемшĕн
Йурлатпăр епĕр — ĕçпе ўсĕрĕлнĕ, хаҫ килнĕ
сăвăçсем;
Найан çынсем мар, шурă алăлли мар, —
Тĕттĕм асапран килсе ирĕке хапăл тăвакансем,
Пайанхи ирĕкшĕн ĕнер вăрçăра çапăçнă паттăрсем
Итлĕç савăнса ĕçлĕ пурнăçăн савăнăçпе хурлăхне.

*Кĕтеснер. 1922.*

## Ирттĕр кивĕ ĕмĕр.

Вăрăм ыраш,
Сарă ыраш
Тыр пуссинҫе хумханаť.
Выçлăх иртсе,
Асап иртсе—
Пайан хресҫен савăнаť.
Лапра çаран,
Пулнă çаран—
Унта çынсем пухăннă;

Утă çулаç,
Карта тăваç —
Çава ĕçлет алсенҫе.
Çил вăшăрхаť,
Утта типтет —
Курăк кĕрет купана.
Ыраш вырма
Кунĕ çитнĕ,
Ҫас курăпăр çурлана.

— Хурçă çава,

Хурçӑ çурла
Хаԓхи хресҭен аллинҭе.
Çултан çулах
Авалтанпах
Пурнаççӗ йалсенҭе.
Çурхи ӗç те,
Акас ӗç те
Йалан суха аллинҭе.
Хаԓ йӑвӑрлӑх,
Пур хӗн хурлӑх
Вӗсем кӳреç хресҭене.
Ҭасах иртӗ
Вӗсен ӗмри,—
Кив йал таçта саланӗ.
Ун вырӑнне
Çӗнӗ тӗнҭе,
Çӗнӗ телей пуçланӗ.
Çут çанталӑк
Вӑйлӑ вӑйӗ
Пирӗн алра ҭас пулӗ.
— Хурçӑ машшин,
Тимӗр машшин
Ӗçлӗ йалти ӗçсене.
Хӗвел çутти,
Хурçӑ çутти
Тӗсе кӗртӗ хирсене;
Електритсӑ вӑйхӑваҭӗ
Илемлетӗ йалсене.
Пулас етем —
Тимӗр етем,
Ун пурнӑçӗ машшинра.
— Ирттӗр, пӗттӗр
Хаԓхи ӗмӗр,
Ӑна пӗртте шеллес мар.
Ун хыçӗнҭен
Савнӑç килет,
Ӑна мӗншӗн кӗтес мар!
Етем ӑсӗ
Ирӗкленҭӗ,
Ӑна мӗншӗн шанас мар!

*Мускав. 1923 ç.*

## Ан айăплăр.

Хула шавне лекиҫен,
Ăна курса пĕлиҫен —
Нумай кунсем,
Нумай ҫулсем
Хир аллинҫе тытрĕҫĕ.
Хĕвел тухсан —
Тухса кайан,
Хĕвел ансан йала кĕрен
Ирпе кунта,
Каҫҫен таҫтан,
Хăйаматран,
Хирсем тăрăх сĕтĕрĕнсе
Хăвса кĕрен кĕтӳне.
Ыран
Каллех
Ҫав ĕҫех...
Пуш вырăнта
Кама курса,
Кама тупса
Ыйтса пĕлес ҫăн ҫинҫен?
Кам пĕлтерĕ ун ҫинҫен?
Шырлан,
Ҫырма,
Лапри ҫаран —
Вĕсем саншăн пурте пĕр тан,—
Пĕри пĕр сас

Кӑлармасӳ.
Иртен-ҫӳрен
Ӗҫлӗ етем
Ӗс пуррине сисмесӗр
Йртет хӑйӗн ҫулӗпе.
Йала ҫитсен —
Ывӑннӑран —
Сӑмах ҫине
Алпа сулан.

Атте-анне тӗттӗмӗпе
Пӗҫӗк ҫухне пӗлсе йулнӑ кӗлӗпе,
Вӑхӑҫӗпе,
Пуҫҫапни те пулнӑ пулӗ, —
Айӑпӗсем манра мар.
Каламасӑр иртес мар:
Асап ытла пысӑк пирки,
Ытла хайар вӑхӑтсенҫе
Пуйансене тилмӗрнисем
Иртнӗ кунра вӗҫӗмсӗр...
Астумасӑр
Ан айӑплӑр
Кӗрешӗве
Кайарахпа килнӗшӗн.
Пӗлсе ҫитсе килиҫен
Ҫылай пӗтрӗҫ вӑйӑмсем. —
Револютси ҫулӑмӗ
Ҫӗнӗ вӑйсем туптарҫӗ...
Ҫулсем ҫамрӑк, вӑхӑт ҫивӗҫ,

Ляпкă пурнăç тивĕçмест.
Пулса çитмен ĕçсене
Хаџ тăватпăр кĕрешсе!

*Мускав. 1923 ç.*

## Ĕçлекене.

Малтанах еп сана хапрăкра тĕл пултăм,
Сан çире ҙăвашсен улаҙа кĕпиҙĕ,
Уруна кив тăла, çăпата сырнăҙĕ;
Тин йалтан килнипе, ес хăвăн вăйна
Хăйусăр параттăн тимĕре хускатма.
— Выçлăхпа ман йалта пурнăçăм тĕп пулҙĕ,
Çурт-йĕрĕм пуйана ĕмĕре ман йулҙĕ,
Мăшăрăм вилҙĕ те, аҙасем йулҙĕçĕ,
Ĕмĕрĕм ман кунтах иртет пуџ, терĕн ес.
— Ан куџан, хапрăкра ес çеç мар ĕçлетĕн,
Йулташсем нумайăн. Хапрăкра пĕрлешсе
Кĕрешсе илĕпĕр хамăра кирлине.
Çакăнта ес тупăн телейлĕ пурнăçна,
Кĕрешех пирĕнпе пĕрлешсе. терĕмĕр.
Çак кунран вара ес ҙăнлăха тин пĕлтĕн,
Ĕçлекен кил-йышне хавассăн çыпăçрăн;
Йаланах вăрçăра пĕрлешсе çапăçрăн,
Йалăнти тăванна вăйупа пулăшрăн.
Йе çĕнес, йе вилес — çапăçас, терĕн ес.
Ирĕккĕн сывлатăн хапрăкра хаџ ĕнтĕ,

Савӑнса пӑхатӑн хӑв тухнӑ йал ҫине.
Кӗрешӳ пӗтменхэ, йал та йапӑхха,
Ҫирӗпрех ҫыхӑнтар килӳпе хапрӑкна.
*Кӗтеснер. 1922 ç.*

## Пуйӑс ҫинҫе.

Пуйӑс хытӑ ҫупнӑран
Вӑхӑт шуни туйӑнмасӑ.
Вакун кӗрлет, ҫӗтренет,
Пуйӑс сасси йан кайаӑ.
Кашни вӑхӑт куҫ умне
Ҫӗнӗ тӗссем ҫывхартаӑ:
Пысӑк йалсем мӗлтлетеҫ,
Ҫӑрӑш вӑрман, ҫиркӳсем,
Йешӗл уҫӑм пуссисем,
Хура пуссем, ҫарансем—
Курӑнаҫҫӗ, йулаҫҫӗ.
Ҫӑнкӑртатаҫ кӗперсем,
Сӑнпа йулаҫ ҫырмасем,
Тӑраҫ-йулаҫ мӑн тусем,
Вӗҫеҫ анҫах ҫухрӑмсем.
Ывӑннӑ пек пашкаса
Ҫитрӗ пуйӑс стантсӑна.
— Кама кирле шурҫӑкӑр?..
— Тварук та пур,
— Улма пур...

Пуйӑс канаҫ, халӑх анаҫ,
Уҫ сывлӑшпа уҫӑлаҫ.
Унтан каллех хӑпарса
Пуйӑс ҫине ларатпӑр.
Правус канса, вӑй пухса
Тата хытӑ ҫуптараҫ —
Вакунсене ҫӗтретсе
Ҫил вӗҫнӗ пек вӗҫтерет.
Вӑрман йенҫен пӑрӑнсан
Вӑрмар стантси палӑраҫ;
Пуҫри хумлӑ шухӑшран
Пӗҫӗк шухӑш уйӑрлаҫ:
— Пурнӑҫ ҫупаҫ пуйӑс пек,
— Ҫулсем иртеҫ ҫухрӑм пек...
— Вӑрмар, Вӑрмар, ан хурлан,
Пулнӑ кунна ҫеҫ хурла...

. . . . . . . . . . . . .

Правус пӑспа сывласа
Каллех ҫитрӗ стантсӑна.
Кунта пире урӑх сӑн:
— Ҫӗнӗ ҫуртсем — кив вырӑн,
Кивӗ ҫынсем — Ҫӗнӗ сӑн.—
Тарҫӑ сӑнӗ тасалнӑ..
Каллех ҫӗртен тапранса
Хирсем урлӑ вӗҫетпӗр.
Каҫхи тӗттӗм, ҫил-тӑвӑл та,
Пире ним те ҫараймасҫ.
Тата нумай каймалла,

Стантсăсенҫе канмалла,
Ҫапах иртер малалла,
Пулас кунсем йенелле!

V/23. *Мускав — Самар.*

## Пĕҫĕкрех ҫухнехи.

I.

Ытла айван пулнăран
Ҫынсене те култаран.
Хăш ҫухне
(Пушă ҫухне)
Иртнĕ кунсене умна тăратан,
Вара, асилсен, хăв та вăйланан.
Пĕринҫе хам тусăм Павăлпа,
Вăрҫă тухнă сăлтавпа
Калаҫрăмăр каҫпа:
-- Мĕншĕн вăрҫаĭши патша
Нимĕҫсемпе тапăшса?..
— Ахаљ ҫын хăй —
Патшана ларнă,
Ывăлĕ ухмах пултăр —
Патшарах курăпăр...
Каҫ пек тĕттĕм
Йалта ҫĕртĕм.
Ыратнă шухăша
Никам тăмарĕ пулăшма.

Нушапа асапра йӑнӑшви
Илтӗнҫӗ те пуљ тулашне.
Йут ҫын килни пулмарӗ,
Йал та хӑйне шанмарӗ.
Кунсерен
Куллен —
Йаланах пӗр вӑхӑт,
Асапна ҫеҫ ӗнсӳпе йат.
Приставсемпе тӳресене
Курман кунах иртмесҫӗ,
Старастана суйласси те
Лӑпка пулса тӑмасҫӗ.
Йал вӑрманне
(„Ҫиҫ-ҫырмана")
Куштан Лекҫей пухнӑҫӗ,
Ҫтенкке муҫи
(Армак хуҫи)
Кивҫен те пит памасҫӗ.

II.

Терентей Сахарӗ
Салтакран килсен
Пӗр ҫапла каларӗ:
Револютси килсе ҫитсен —
Сурӑх патша
Тарӗ таҫта, —
Мӗн пур хресҫен
Хуҫа пулӗ ҫӗр ҫинҫе.
Сӑмах шӑппӑн саланҫӗ йала,

Кашни килтех илтрӗҫ ӑна.
Йал ҫылай пӑшӑлтатрӗ:
Ӗлӗк те студентсем шавларӗҫ —
Шухӑшпа ирӗке шантарҫӗҫ,
Кайран хамӑра хӗстерҫӗҫ.
— Кам тӑрӑштӑр ҫухӑншӑн?
Кашни пурнаҫ пӗр хайшӑн.
— Ҫук, Сахар ухмах,
Турра хирӗҫ пыраймӑн, —
Путех, каллех
Йумах.
Вара манҫӗҫ йумаха.

Револютси...
Мӗн вӑл револютси?..
Снавай пекех хайар пул вӑл,
Пуйансене хӗртет пул,
Патшана та тартӗ вӑл,
Сахар ҫавна тӗкрӗ пул.

Кунсем вӗҫрӗҫ,
Ҫулсем иртрӗҫ.
Хӗвел анӑҫ пӗлӗҫӗ
Йунпа питрех хӗрелҫӗ.

III.

Пӗрре Хвеҫук пиҫҫе
Стантсӑран килҫӗ:
Пайан хыпар илнӗ,
Патшана сирпӗтнӗ, терӗ.

Халăх ĕненмерĕ.
Еп ҫупрăм Павăлсене:
— Ей, хайхи, кăларнă лешне!
— Ҫурса пăрах сăнакне! —
Тытрăмăр та, ватрăмăр.
Ун ҫинҫен сырнине кĕлентартен ҫуртăмăр,
Вара ытти килсене ҫупрăмăр.
Хамăр —
Савăнса кулатпăр:
Ăҫта сирĕн патша?
Кӳрĕр ăна кунта!

Йакăп Каврилҫă.
Пит пуйанҫĕ.
Унне те патшине ватсассăн
Вăрҫма пӳҫларĕ хăратса:
— Халех пĕлĕҫ,
Тытса кайĕҫ.

Ăна епĕр:
— Кайĕҫи,
Каймĕҫи —
Сан ĕҫӳ мар,
Пире сăнакне ҫурма ҫеҫ ан ҫар.
Киле пытăм каҫпала,
Инке тăҫĕ мана йатлама:

— Асту, лекăрха,
Тĕплĕ пĕлмесĕр

Аташса ҫӳреттӗр...
Епӗр кулмаллах —
Патшана шыратпӑрах.

IV.

Ҫӑва тухсан
Пирӗн йал та хусканҫӗ,
Шухӑ пухса
Ҫӗр уйӑрма тытӑнҫӗ.
Вӗлле хурҫӗ майлӑ
Вӗркерӗ йаллан.
Ытла вӑйлӑ
Ҫухӑрҫӗ малтан.
— Илес, — терӗ
Ҫӗре..
— Креппитсене пӗтерес...
Сас сарӑлса стантсӑна ҫитнӗ,
Унтан праппӑршҫӑк йала килнӗ.
— Учретиттӗлни сопрани пулӗ,
Ӗҫ мӗнливе вӑл калӗ.
— Кӗт сире,
Ҫӗрӗ халех
Кирлӗ пире, — тет халӑх.
Апла иккен револютси,
Камаши усси?
Пӑлханса кайнӑ халӑха
Праппӑршҫӑк та ҫарма ан шутла —
Ҫӗре уйӑрҫӗҫ,
Креппите тасатрӗҫ.

Ҫамрӑк ҫӗрем ҫулӑмпа ҫунҫӗ,
Йалӑн вӑйне сиссе савӑнҫӗ.
Ҫӗвен тӑрса инҫенелле—
Кунсем урлӑ пӑхас килҫӗ,
Лөре, хуласем йенҫе
Ҫӗнӗ пурнӑҫ палӑрҫӗ.

*Мускав.* *1924 ҫ.*

## Ҫан сасси.

Иртеннех пайан
Йанӑрат̆ ҫан сасси,—
Шанатӑн, айван,
Турӑсен турпасне.

Ҫӗрекен ҫирку
Пухат̆, ав, ватӑна,
Ҫамрӑк ўт-пў
Салатат̆ тӗнўна.

Нумайах пымӗ
Пупсем йӑслани;
Ывӑлу пулмӗ
Санпекех айванни.

Тарҫӑра пулма
Ҫӗннисем ҫуралман.
Халапа шанма
Тӗнҫи тө кивӗ мар.

Кӗпе-йӗм пухмӗ
Ҫиркўсен шӑршӗне;
Тӑн-пуҫ илмӗ
Тӗн-сӗрӗм ултавне.

Иртеннех — тӑлӑх —
Йанӑрат̆ ҫан сасси—
Ыранхи кунлӑх
Йулаймӗ уласси.

*Мускав,* *1922 ҫ.*

## Еп ҫитĕп.

I.

Каҫ лăпкăҫĕ,
Ăшăҫĕ,
Ҫурт тавра та пит шăпҫĕ.
Улмаҫҫи ҫеҫекĕ шурални
Тĕттĕмре илем кӳретҫĕ.

Ес пăхни,
Выљани,
Кулнисем, —
Савăннă ырă минутсем
Вĕҫетҫĕҫ... телейлĕ вăхăтсем.
Тĕнҫипе те
(Ҫĕр ҫинҫе)
Санпа еп ҫеҫ пекехҫĕ.

Астăватăп ăна,
Хам улшăннă пулсан та:
Лăпкă иртетҫĕҫ кунĕсем,—
Кункаҫиҫен ĕҫлетĕн,
Каҫ пуласпа
(Ĕҫ пăрахсан)
Ывăннине пăхмастăн,
Савни патне ҫупатăн.

Вăхăҫĕ те аванҫĕ,
Хам ҫулсем те сахалҫĕ,—
Нуша лекменҫĕ пуҫăма.

II.

Унтан çулсем,
Вăхăтсем
Çунатланса вĕçрĕçĕ.
Вăхăт мана
Хăврĕ йалтан—

Иалти пурнăç йапăхнипе
Тепĕр ĕмĕр пуçланҫĕ.

Çĕнĕ тĕнҫе,
Хĕн асап—
Йăвăр ĕçлĕ кунçулсем,
Малтан çапла:
Хулпуççинҫе кутамкка,
Аллăвăнта хыр туййа.
Пайан кунта
Пĕр çĕрте,—
Ыран çулпах малалла
Утмалла.

Хапрăка пыран—
Ĕç ыйтан,
Унта сансăрах
Паçăрах туллийех.
Сĕтĕрнен каллех
Çулпалах.

III.

Ĕçө лексен
Пуçна ђикен,
Ўт тарлиђен ĕçлетĕн,
Çын мулĕшĕн тўсетĕн.

Кунран кунах канăçсăр
Выçлă-тутлă пурнатпăр.
— Йалан ĕçле,
Ан шарла—
Ĕç йăвăрне ан хурла...

Анђах епĕ
Пĕђен мар.
Хапрăксенђе
Машшин панђе пĕр ĕçре—
Ĕçлекенсем—
Çĕрĕпе мар,
Пинпө те мар—
Нумай пинпе,
Мĕлйунĕпе пĕрлешрĕç.

IV.

Пайан, ĕнтĕ,
Савăнăçра—
Ирĕк ĕçлĕ хулара.

Ес йултăн çаплах,
Йалăнтах.
Маларах мана манмасăр

Куллен куҫантăн.
Урăххине шанмасăр
Мана тытрăн ăсунта.
Йалтан тухмасăр
Телейпе йулнисем—
Пулаймарĕç саншăн туссем.
Кĕтеттĕн мана,
Куҫанса йараттăн çыру та.

## V.

Пĕркувах хуларан
Сасăсем йанăрҫĕç,
Пуйанран тӯснисем
Çапăçма ҫас тухрĕç.
Ес ун ҫухне
Çĕнеймерĕн тĕттĕме.
Çапăçу пынă ҫух
Çĕрĕ те ҫĕтрерĕ...
Сисрĕн пуҫ пурне те,—
Куртăн ес йунсене
Тӯсрĕн ес нушине те—
Пĕлмерĕн çав мĕншĕнне,
Кĕрешмешкĕн кирлине.

## VI.

Кив йалти ҫухăнсем—
Çапăçма килнисем—
Пирĕнпе ĕлĕкех пĕр çемйе.

Ĕнер—
Пĕрлешсе çапăçса
Тăшмана çĕнтĕмĕр.

Енер—
Çапăçма килнисем
Йалсене саланҫĕç.

Анҫах—
Йалу çаплах—
Тĕттĕм айĕнҫех.
Хĕсĕнсе ларнă çĕрĕке

Çын пуçĕнҫен катертме
Хресҫенĕн вăй çитеймест.
—Тĕттĕмри

Тĕттĕмрех
Тĕршĕнет кунсерен,
Хăпаймасҭ вырăнĕнҫен.

VII.

Çапăçу кунĕнҫе
Ес мана маннăҫĕ,

Çиленсе сурнăҫĕ уп ҫухне
Ман çине,
Кĕтме пăрахрăн хаљ ĕнтĕ.
Кĕтмен çĕртех
Еп çитĕп.
Тимĕр ҫĕреллĕ епĕ
Çитĕп.

Çапса салатăп
Тĕн тĕмне,
Пĕртте хĕрхенмĕп
Тĕттĕмне.
Хурçă шăпăрпа
Хăвармăп пурнăçри çӳпçапа.
Хăрушшăн илтĕнĕç
Сăмахсем,
Киҫемле туйăнĕç
Еп тунă ĕçĕмсем,—
Çутса йарсан çутăна
Тин курăн ес ҫăнлăха!
Саплăклана кантăкĕ
Пит нумайах макăрмĕ.
— Çĕнни тухнă,
Йала çитнĕ —
Вăй пухасси çеç йулнă.
Петҫĕрех тайăлнă.
Пӳрҫĕсем,
Кивĕ тĕнҫе—
Мĕнпур тислĕк
Пирĕн ĕмĕрте пĕтмелле.

*Мускав. 1923 ç.*

## Йалта.

(Торонинӑнни майлӑ)

Акӑ йала ҫитрӗм те,
Ҫивҫӗ пуртӑ — ҫӗлхемпе
Ҫӗрнӗ пурнӑҫ таврашне
Касса тухам пӗтӗмпе.

Курӑпӑрха, —
Мӗн те пулсан пулӗха.

— Ҫӗлӗш ҫалӑш пӳртӗмсем!
Ҫитӗ сире шӳмешкӗн,
Ҫӗрӗк пуснӑ кантӑксем,
Кам хушрӗха йӗмешкӗн?
— Ҫил! Итлеха:
Пуҫтарха йухӑннӑ пӳртсене,
Вӗҫтерха йалӑмри ҫӳпсене—
Пур мӑшкӑла
Такҫанах
Йал ҫырмине йамалла!

Револютси вӑрман пек тӗтгӗме
Ҫутатнӑ тӗлте
Ун пек пурнӑҫ йурайи?

Ех, урам,
Аслӑ урам!
Хӑҫан сана тислӗксӗр курам?
— Анасене ҫӗнетмесӗр

Тыр пуласса шанатăр,
Выçлăх патне çитсессĕн
Пупран ырлăх кĕтетĕр.

— Хăвăр хăвалăр,
Ывăгăр рисă витнĕ харама —
Нумай ҫыкрĕ пыйтă-шăрка,
Вăхăт мари тасатма?

Мĕн пуçăра пăрса
Ҫалăшшăн пăхса
Тăратăр?

Паллах —
Пурнăçăн тăвăлĕ пуринҫен вăйлăрах.
Йалсем анҫах мар,
Аслаҭи авăтсан —
Аслă хула тăраймарĕ.

Ҫăтăпăр:
Малта савнăç тăвăпăр.
Çут тĕнҫери çĕрĕксене тасатасси
Çăмăл пулĕ терĕри?

* * *

Нумайах пулмасҭ,

Хĕл сиввинҫе,
Кашкăр улана-йынăшнă ҫухне
Пурнăç йӳçĕкне çăтса
Тухса кайрăм йалтан.

Хаљ —
Çилтăвăлпа ӳсĕрлнипе
Каллех еп йалта.

Хаљ —
Хăпартланса ăш çуннипе
Тухрăм мăкланнă, çăм пуснă пуссем хуш-
шине.

Çухăратăп,
Кăшкăратăп,
Кашни курака калатăп:
— Куракăм,
Ан макăр —
Пирĕн йалтах
Пурнăç пулĕ — шанса тăр.

Ех, йалăм!
Пурнăçна мĕн ђухлĕ ылхантăн,
Ирĕке тухасса шанмарăн, —
Тӳсрĕн.
Анђах халиђен кунсĕрен
Пусма ларнă ђăхла кăлклатăн,
Ларсах ĕнтĕ ватăлтăн.

Епĕ çамрăк,
Çурхи ђеђек пек çамрăк—
Мана
Кашни ишĕлнĕ çатан
Ес вилессе кăтартаŤ.
Вилетĕн ес, вилетĕн,

Вăхăт çитнĕ вилмешкĕн.
Ес вилессе пĕлтермешкĕн
Мана йаҫĕç хуларан:
Çĕн йал кунта вырнаçмашкăн
Вырăн тасат ес пайан.
Ун ҫух виллӳ çине тăкмăп куççулĕ,
Ҫĕрем те ыратса хĕсĕнмĕ!
Аслатиллĕ пăлхавăрта
Ун пекки çеç пулҫĕи?
—Унăн пушар çулăмĕнҫе
Урăх ҫеҫек çурăлҫĕ.
Кунта—
Çулла урапа.
Хĕлле çуна—
Пыйтă пек шăваççĕ урампа.
Кунта —
Çăпата ăсти,
Çип хултăрҫи
Йӳçĕ ухмахпа путланнă лапах.
Кунта —
Кунсерен
Хирсене
Выҫăх мар,—арлан йараççĕ.
Хирĕ кукша пуç пек —
Тап-таса та йап-йака.

*
* *

Ех, астурăм,
Ех, куртăм...
Ирпе çырма авкаланса
Кĕмĕл пек йухаҭ,
Астараҭ.
Тин тĕрленĕ симĕс çаран
Ăшҫикĕме хăпартлаҭ.
Ех, шывăм, йухăм çырма,
Ех, хирĕм, илемлĕ çаран...
Йуратрăм кăтраллă вăрмана,
Йуратрăм лапри çарана...
Кăтраллă вăрманта
Савăгсем ӳснине курасҫĕ,
Çаранлă улăхран
Машшин сасси илтесҫĕ!

*Шупашкар. 1925 ç.*

## Таса çăнăх.

„Пирĕн пуп — пытарнăшăн, кĕлтунăшăн, венчет тунăшăн, тĕне кӳртнĕшĕн çăнăх илет.“
1923-мĕш çулта Мелекес чăвашĕсем калани.

Чиркӳре турăшсем шуралнă,
Çăнăхпа варланса ватăлнă.—
— Вилсен те, çуралсан авлансан
Леçеççĕ хресченсем çăнăхне.

Хыçалта çуртасем суттинче
Йешчĕкĕ туллийех çăнăхпа.
Чиркӳвĕн ĕмĕрхи старăсти
Хупланнă пичĕпех вăл мулпа.
Пачăшка амвунран тăсăлса
Сухалран тăкать çăнăха.—
Пилленĕ, кĕлтунă вăхăтра
Танлашать ватăлнă турăпа.

Ерне кун старăста лавпала
Турттарать çăнăха пасара:
Тăвансем
Пăхăрха кунталла;
Çылăхшăн
Илĕрха таса çăнăха.

Каҫпала пуппала тупӑшне ӳйраҫҫӗ,
Кӗсйисем тулнӑран ерехпе асаҫҫӗ.

Хресҭен ҫеҫ килӗнҭе выҫӑхса
Кунӗпех тӑрӑшат̆ куԓанса.

*1923 ҫ, Мелекес.*



# Тупмалли

*Стр.*

Умĕнхи сăмах Солăттăв М. . . . . . . . . . . . . 3.
Пирĕн сăвă . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 5.
Ирттĕр кивĕ ĕмĕр . . . . . . . . . . . . . . —
Ан айăплăр . . . . . . . . . . . . . . . . . 7.
Ĕçлекене . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 9.
Пуйăс çинҫе . . . . . . . . . . . . . . . . . 10.
Пĕҫĕкрех ҫухнехи . . . . . . . . . . . . . . 12.
Ҫан сасси . . . . . . . . . . . . . . . . . . 17.
Еп çитĕп . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 18.
Йалта . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 24.
Таса çăнăх . . . . . . . . . . . . . . . . . 29.

Хакĕ 25 пус

